# ХЫҪАЛТИ ПАРТА

№3 (03) 2006

*Кайри мала!*

***Шкул ачисен хаҫачӗ*** ***2006 ҫулхи раштав 21-мӗшӗ — 2007 ҫулхи кӑрлач 18-мӗшӗ***


## *Шкул пики*



**Вика Степанова, Калайкасси шкулӗ, 9 класс:**
***«Савӑнӑҫ, юрату, телей сире 2007 Ҫӗнӗ ҫулта!»***

Хаклӑ тӑвансем!

Сире ҫитес ҫулта ӗмӗтленнине пурнӑҫлама, йывӑрлӑхсене пӑхмасӑр малалла ӑнтӑлма вӑй-хал, иксӗлми телей, ҫирӗп сывлӑх тата ӑнӑҫу сунатӑп.

Ҫирӗп сывлӑхпа пӗрле татулӑхпа юрату сирӗн килӗрсенче хуҫа пулччӑр.

**«Моргаушская» чӑх-чӗп**
**фабрикин тӗп директорӗ**
**Николай Григорьевич Ванеркин**

## ҪИТЕС НОМЕРТЕ:

**Финлянди шкулӗ;**

**Конкурссемпе логика задачисем;**

**Шкулта милици академийӗ;**

**Ҫӑлтӑрсем патне ҫул /фантастика/;**



## *Хисеплӗ туссем!*

Шкул шайӗнче ҫакӑн пек хаҫат тухма пухма пуҫланишӗн эпӗ ҫав тери савӑнатӑп, ӑна калӑплакансемпе мухтанатӑп! Виҫ-тӑват ҫул каялла шкулта «Эрне» хаҫат тухма пуҫланӑччӗ. Ун пуҫаруҫи — Эльвира Владимировна Портнова. Тӗрлӗ сӑлтавсене пула хаҫат аталанса каяймарӗ. Кӑҫал вара Александр Марсович Степанов, Владимир Николаевич Кожевников тата Эльвира Владимировна пӗр командӑра ӗҫлеме пуҫланӑ пирки «Хыҫалти парта» ятпа хаҫат ҫӗнӗ вӑй илсе ҫӳллӗ шайра тухма пуҫларӗ. Хаҫат ҫав тери интереслӗ. Ҫӗнӗ номер тухасса хам та чӑтӑмсӑррӑн кӗтетӗп. Унӑн ӗҫченӗсем хушшинче тата ҫӗнӗ ятсем хутшӑнса пынишӗн кӑмӑл ҫӗкленет. Апла пулсан, ытларах шкул ачи хӑйӗн пултарулӑхне аталантарма, шкул пурнӑҫне тӗрлӗ енлӗн сӑнласа пама тӑрӑшать. Хаҫатӑн тӗп тӗллевӗ — ашшӗ-амӑшне, тӗрлӗ шкулсенче вӗренекенсене шкул пурнӑҫӗпе паллаштарасси. Ачасене тӗрлӗрен интереслӗ япаласем ҫинчен каласа парасси. Шкул ачисем хӑйсен сӑвви-халапӗсене, юмахӗ-шӳчӗсене ҫак хаҫатра пичетлеме пултараҫҫӗ.



«Хыҫалти парта», ман шутпа, питӗ кирлӗ. Унӑн кун-ҫулӗ вӑрӑм пултӑр, вӑл районти тата республикӑри кашни шкул ачи патне ҫитме пултартӑр.

Ҫывхарса килекен Вут-ҫулӑмлӑ сысна ҫулӗ ячӗпе пурне те чун-чӗререн саламлатӑп, ырлӑх-сывлӑх, юрату, ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем, иксӗлми телей сунатӑп!

***Калайкасси шкул директорӗ***
***Ирина Венедиктовна Осипова***

## ***Хисеплӗ вулакансем!***

*Акӑ 2006 ҫул вӗҫленсе те пырать. Кашнишӗн вӑл хӑйне евӗрлӗ пулнӑ: хӑшӗсене ҫӗнӗлӗхсемпе савӑнтарнӑ, ҫӗнӗ туссене парнеленӗ, теприсемшӗн ним улшӑнусӑр иртнӗ е кӳренӳсем илсе килнӗ. Эпир темле пулсан та шанчӑкпа пурӑнатпӑр. Пирӗн пӗтӗмпех йӗркеллӗ пулассине чун-чӗререн туятпӑр, шанатпӑр.*

*Эппин, шанӑҫа ан ҫухатӑр! Тӗллевлӗ те мал ӗмӗтлӗ пулӑр. Ҫапла пулсан пирӗн пурнӑҫра пӗтӗмпех йӗркеллӗ пулӗ.*

***Редакци***

## ***Хаклӑ ачасем, ашшӗ-амӑшӗ, вӗрентекенсем!***



Сире Ҫӗнӗ Ҫул ячӗпе саламлатӑп, ҫирӗп сывлӑх, телей, ӑнӑҫу сунатӑп. Кун-ҫулӑр сурпан пек вӑрӑм пултӑр, мӗн ӗмӗтленни пурнӑҫланса пытӑр.

***Валерий Рубцов,***
***шкулӑн тимлекенсен***
***Канашӗн членӗ, усламҫӑ***

# *ТУССЕМ, ҪӖНӖ ҪУЛ ЯЧӖПЕ!*